Чăваш Республикин наци библиотеки

«Лучший литературный экскурсионный маршрут Чувашской Республики» конкурс

Экскурси маршручĕ

# «Ĕмĕр сакки сарлака та, пурнăç çулĕ тăвалла»

(Н. Мранькка пурнăçĕпе тата унăн романĕпе çыхăннă паллă вырăнсем)

Проект тăваканĕ:
Морозова Надежда Ивановна,
Куславкка районĕн Елчĕк вăтам шкулĕн
чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ
Тел.: 89279985709

Куславкка, 2022

Кӳртӗм

Хисеплӗ хӑнасем, сире «Ӗмӗр сакки сарлака та, пурнӑҫ ҫулӗ тӑвалла» экскурси маршручӗпе ҫула тухма йыхравлатпӑр. Эпир чӑвашсен паллӑ ҫыравҫи Никифор Мранькка ҫӳренӗ ҫулсемпе утма, унӑн «Ӗмӗр сакки сарлака» романӗн сӑнарӗсем пурӑннӑ вырӑнсене ҫитсе курма чӗнетпӗр. Пирӗн экскурси Куславкка хулинче пуҫланӗ. Эпир чӑваш ҫыравҫи пурӑннӑ ҫурт тӗлӗнче пулӑпӑр, унӑн вил тӑпри ҫинчи палӑк умӗнче сӑн ӳкӗпӗр. Унтан писателӗн тӑван ялне ҫитӗпӗр, Н. Мранькkан романӗнче сӑнланнӑ ялсем витӗр иртсе сӑртри Елчӗк ялӗнче чарӑнӑпӑр.

Маршрут тӑршшӗ – 25 ҫухрӑм. Экскурсире 4 чарӑну пулӗ. Экскурси вӗҫленсен Энтри Пасарӗнчи столовӑя апатланма кӗрӗпӗр, е Кайӑк вӗҫӗвӗнчи пӗр юрттӑра (маларах калаҫса татӑлса) апатланма пулӗ.

Тӗп пай

Экскурсие пуҫлӑпӑр. Куславкка хулин пасарне хирӗҫ Никифор Мранькка пурӑннӑ ҫурт вырӑнне лартнӑ чул палӑк умӗнче пуҫтарӑнатпӑр.




Ку палӑка 2014 ҫулта лартнӑ. Унччен ку чул вырӑнӗнче Н.Мранькка пурӑннӑ ҫурт вырнаҫнӑ (ҫурчӗ пушарта кӗлленнӗ). Мранькка ҫемйи ку ҫуртра 1968 – 1973 ҫулсенче пурӑннӑ.

Куславкка хулин масрӗнче чӑваш ҫыравҫин вил тӑприйӗ ҫине те 2018 ҫулта чул палӑк лартнӑ.



Ку палӑка лартма укҫа-тенкине пушкӑрт ҫыравҫисем пуҫтарнӑ. Вӗсем Н.Мранькканa хӑйсем патӗнче шутсӑр сума сӑваҫҫӗ.

Малалла ҫул пире писатель тӑван ялне илсе ҫитерӗ. Асфальт ҫул тикӗс. XXI ӗмӗр пуҫламӑшӗнче кунта шурӑ чул сарнӑ ҫулччӗ. Ӑна истори кӗнекисенче Кӗтерне ҫулӗ тесе палӑртаҫҫӗ. Куславкка районӗнче вӑл Куснар, Карач ялӗсем ҫумӗпе иртет. Патшана хирӗҫ калакансене, ҫын вӗлеренсене, арестантсемпе пуҫ иле янӑ ҫынсене ку ҫулпа Ҫӗпӗре ӑсатнӑ. Ҫавӑнпа кӗрхи сивӗ ҫумӑрлӑ ӑмӑр ҫанталӑкра сӑнчӑрсем чӑнкӑртатни илтӗннӗн туйӑнать, е тата хушӑран тӑрантас урарисем тӑкӑртатни хӑлхана кӗрет пек (И.Яковлев Карач е Куснар шкулне тӗрӗслеме килет).

Ҫак самантрах тата куҫа хӗллехи тӑмана пӑхмасӑр ҫиле хирӗҫ утакан ача курӑнса каять. Ку вӑл 12 ҫулхи  Мранькка Куславккана 2 класлӑ шкула утать. Шӑнса ан пӑсӑлтӑрччӗ…

Акӑ пирӗн автобус Пилешкасси еннелле пӑрӑнчӗ. Сылтӑм енче Кайӑк вӗҫевӗ текен вырӑна илсе каякан машин ҫулӗ пулать. Кайӑк вӗҫевӗ – Куславкка тӑрӑхӗнчи чи ҫӳллӗ вырӑн шутланать. Кунта юлашки икӗ-виҫӗ ҫул хушшинче турист халӑх  йышлӑ килсе ҫӳреме пуҫларӗ. Тӗрлӗ пысӑк мероприяти иртерме тата паллӑ датӑсене уявлама шурӑ юрттӑсем туса лартнӑ.

Тикĕс çул Н.Мранькккан тăван ялне илсе çитерчĕ. Эпир вăл çуралнă çурт умĕнче чарăнатпăр, çурт çывăхне пыратпăр. Асăну хăми çине çырнине вулатпăр. (Ку асăну хăмине 2021 çулта уçнă.)



Ялтан тухсан сулахай енче çăра йывăçлă чăтлăх вăрман куратпăр. Ăна Пакăш вăрманĕ теççĕ. Çапла, ку вăл – вăрă-хурах иленнĕ кĕтес. Ватăрах çынсем Пакăш ял пуçĕнче хура юпа ларнине астăваççĕ. Ĕлĕк кун пек юпасене вăрă-хурах ялĕсем патне лартнă. Иртен-çӳрен вара ун пек ялсенчен пăрăнса иртме тăрăшнă.

Автобус Тĕмшер ялнелле çул тытать. Ял витĕр тухсанах Варасăр ялĕ пуçланать. Ял вĕçĕнче чарăнатпăр, автобусран тухатпăр. Варасăр сăртĕнчен куçпа виçейми тавралăх курăнать.



Ик енĕпе – вăрман. Сылтăм енчи сăртра ларать, сулахай енчи – Энĕш айлăмĕнче. Умра – хĕвел çутинче тĕкĕр пек йăлтăртатакан пулă кӳллисем.

«Карамышевское» пулă хуçалăхĕнче 6 кӳлĕ. Вĕсенче çутă карп ĕрчетеççĕ. Сăрт айлăмĕнче ялсем: Аманик, Елчĕк, Мушар, Хурамал, Мăрсакасси…

Акă вăл Н.Мранькка «Ĕмĕр сакки сарлака» романра сăнланă тавралăх! Ытарайми хитре, ытарайми асамлă, пуян, тулăх çĕр… Пултаруллă, илемлĕ, ĕçчен, вăйлă та сапăр çынсем… Пурте ячĕсене улăштарса кĕнеке страницисене çырăннă. Пуç ватса шухăшламалăх пур: Ванюкпа Анюк кама пăхнă-ши?

Çтаппан прототипĕ çинчен вара калама пултаратпăр. Романри Çтаппан вăл – Елчĕк ялĕнче пурăннă Иван Измайлович Измайлов (ялта ăна Измалч тесе хисепленĕ).



Çак çынна Никифор Федорович аван пĕлнĕ. Иван Измайлович Измайлов вăрăм ĕмĕр пурăнса ирттернĕ. Вăл 1862 çулта çуралнă, 1960 çулхи авăн уйăхăн 13-мĕшĕнче 98 çул тултарса çĕре кĕнĕ. Куславкка тăрăхĕнчи Г. Ксенофонтов тавра пĕлӳçĕ вăл Елчĕк ялĕнче çуралнă тесе çырать. И.И.Измайлов мăнукĕ, халĕ Елчĕк ялĕнче пурăнакан Майорова Тамара Григорьевна, унпа килĕшмест. Вăл аслашшĕ тăванĕсемпе пĕрле Рязань енчен куçса килнĕ тесе ĕнентерет. (Тамара Григорьевна аслашшĕсем мĕншĕн куçса килни çинчен ыйтса пĕлес тесе амăшĕ пурăннă чухне темиçе хутчен те сăмах тапратнă, анчах Елизавета Сергеевна кашнинчех пирĕн ăна пĕлмелле мар тесе сăмаха пăрса яратчĕ тет.) Аслашшĕ вырăс çынни пулнă. Тăванĕсенчен икĕ йăмăкне тата пĕр шăллĕне асăнаççĕ. Шăллĕ Микола хальхи Хурамал ялĕнче

пурăннă. Ăна пиччĕшĕ пек Измайлов хушаматпа мар, Савельев тесе чĕннĕ. Тамара Григорьевна пĕр çемьери çынсемех икĕ хушаматпа çӳренине 30-мĕш çулсенчи синкерпе ăнлантарса парать: «Пирĕн асаттен ялта икĕ хутлă пӳрт пулнă. Асаттене кулак тесе айăпланă хыççăн çав пӳрте тытса илеççĕ те Вăрмара куçарса каяççĕ».

И.И.Измайлов куçса килнĕ çын пулнине ĕнентерекен тепĕр тĕслĕх вăл – Елчĕк паттăрĕн ачалăхĕпе çамрăклăхне пĕлекенни никам та çукки. Астăвăр-ха. роман пуçламăшĕнче те пирĕн ума 45 çулхи çӳллĕрех пӳллĕ, сарлака хул пуççиллĕ, патвар кăкăрлă этем тухса тăрать. «Çĕмĕрт пек хура та чĕрĕ куçĕсем, кăшăлласа каснă йăлкăн çӳçĕ ăна тата çамрăкрах сăн кĕртеççĕ». Ялти ватă çынсем те Çтаппан прототипне çапла ас туса юлнă. «Ĕмĕр сакки сарлака» кĕнеке авторĕ Елчĕке район хаçатĕнче ĕçлекен Иван Николаевич Иртышов патне килкелесе çӳренĕ, çавăнпа Иван Измайлович Измайлова аван пĕлнĕ. Апла пулин те вăл та кĕнекере юратнă сăнарĕ çинчен авлантарнинчен тытăнса çырса каять.

Елчĕкре Измалчсен икĕ пӳ̆рчĕ упранса юлнă. Ку пӳ̆рт тĕп кил вырăнĕ шутланать. Вăл ялти почтăран инçе вырнаçман.



Тепĕр çурчĕ – сăрт айĕнчи Н.Мранькка асăннă çурт. Çак пӳрт никĕсне Çтаппан прототипĕ хывнă. Кунта халĕ унăн мăнукĕн ачи Измайлов Иван Александрович пурăнать



Измалсен йăхĕ хушăнса пырать. Вăл çичĕ сыпăка çитрĕ.




Экскурсие вĕçленĕ май Елчĕк вăтам шкулне кĕрсе тухма сĕнетпĕр. Кунта А.Д.Иливанов ячĕллĕ тавра пĕлӳ музейĕ пур. Çамрăк экскурсоведсем хăнасене хамăр таврари ялсен историйĕпе паллаштарĕç.

Экскурси тексчĕ

Никифор Федорович Мораньков (Мранькка) 1901 çулхи çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче Куславкка районĕн Пилешкасси ялĕнче çуралнă. Хушамачĕ пирки писатель хăй çапла калани пур: «Пирĕн ялсенчи кирек хăш ача та 1917 çулчченхи революциччен ашшĕ ятĕнчен хушамат тунă. Манăн атте – Федор, çавăнпа эпĕ – Федоров. 1920 çулта, Хĕрлĕ Çарта хăсметре тăнă чухне,

Мораньков хушамат илтĕм.» Никофор Мранькка çапла салтакран çĕнĕ хушаматпа таврăннă. Хушамат улăштарнин сăлтавне çыравçă çапла ăнлантарнă: «Ытти салтак çумне тĕрлĕ ят çыпçăнатчĕ те – эпĕ те улăштартăм.»

Ялти чиркӳ прихут шкулĕнчен вĕренсе тухсан 1913 çулта арçын ача Куславккари 2 класлă шкула çӳреме тытăннă. Çичĕ çухрăмри шкула çӳреме çăмăл пулман. Хĕллехи пĕр сивĕ кун Никифор шăнать, чире каять, вара унăн шкула пăрахма тивет. Килте ашшĕ те чирлĕ выртнă. Вун икĕ çулхи ача амăшне çемьене тăрантарма пулăшас тесе тара кĕрĕшсе ĕçлеме тытăнать: Атăл пристанĕнче чайнăйра булка пĕçерет, пулă сутать, юхан шыв тăрăх сулă юхтарать; вăрман та касать, баржа çинче грузчикра та тертленет. (Каярахпа çак вăхăта вăл «Бурлаксем» кăнекере çырса кăтартать.)

1918 çулта Н.Мранькка хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара çыrăннă, ăна Хĕвел тухăç фронтне ăсатнă. Кунта вăл Колчака хирĕç çапăçнă, аларан аманнă. Самар хулинче виçĕ уйăх сипленнĕ хыççăн сывлăхне çирĕплетме тăван яла таврăннă. Сывалнă хыççăн ăна тепĕр хут çар хĕсметне чĕнсе илнĕ, унта вăл 1922 çулхи раштавччен пулнă.

1925 çулта Мранькkана ял Канаш председательне суйланă. Каярахпа вăл ЧАССР Халăх комиссариатĕнче вăй хунă, Тĕп çĕр комиссийĕн председателĕнче ĕçленĕ.

Никифор Мранькка чăваш литературине драматург пулса пырса кĕнĕ. Кĕнеки тухиччен çулталăк маларах чăваш театрĕнче унăн «Элнет» пьесине сцена çинче лартнă. Пьесăра чăваш ачи çармăссемпе пĕрле Мари енчи Элнет шывĕпе сулă юхтарни çинчен каланă.

Никифор Мранькка пьесăсемпе питĕ тухăçлă ĕçлесе каять. Чăваш театрĕн репертуарĕнче унăн пьесисемпе лартнă спектакльсем йышланса пыраççĕ; вĕсен шутĕнче – «Аван пурăнатпăр», «Капкăн хутаççи», «Атăл çинчи Шупашкар» тата ытти пьеса.

1930 çулта пирĕн республикăра «Чăвашкино» вăй илме пуçланă. Мранькkана пултаруллă литератор тесе Мускаври кинематографи институчĕн

сценаристсен курсне вĕренме янă. Унтан таврăнсан Никифор Федорович Иоаким Максимов-Кошкинскипе «Асту» ятлă илемлĕ фильм ўкернĕ.

1933 çулта Мранькканa «Союзкинохроникăра» чăваш студин директорне лартнă, çак ĕçре вăл 1938 çулччен вăй хунă.

1942 çулхи пуш уйăхĕнче Н. Мраньккана Хĕрлĕ çара илнĕ, анчах фронта яман, тылра хăварнă. Граждан вăрçинче аманнине те, хĕрĕхрен иртнине те шута илнĕ пулас. Мранькка Канашри çар чаçĕнче пулас салтаксене вăрçа кайма хатĕрленĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче писатель Куславкка районĕн «Ленин ялавĕ» хаçат редакторĕнче ĕçленĕ, КПСС Куславкка райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн, унтан – райĕçтăвкомăн культурăпа çут ĕт пайĕ заведующийĕнче тăрăшнă.

1950 çулхи партконференцире вăл парти райкомне çивĕччĕн критикленĕ, çавна пула ăна арестленĕ. Вăл ирĕкрен хăтарнă вырăнта 4 çул пурăннă. 1956 çулта унăн ырă ятне тавăрнă.

Никифор Мранькка чăваш литературине «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕпе кĕрсе юлчĕ. Роман сыпăкĕсене вăл, шăпах хăйне ирĕкрен хăтарнă вăхăтра çырма пуçăннă.

Елчĕк ял таврашĕнче романри тĕп сăнар прототипĕ çинчен тĕрлĕ халап çўрет. Хăш-пĕринпе паллашар.

Измалч çўллĕрех пўллĕ çирĕп кĕлеткеллĕ çын пулнă. Мăнукĕ Тамара Григорьевна аса илнĕ тăрăх, вăл сĕтел хушшинче апатланнă чухне пĕр пукан çине вырнаçайман пирки икĕ табуреткăна юнашар тăратса ларнă. «Анне сĕтел çине чугунпа шарни лартатчĕ, сĕтел çине кашăксем хурса паратчĕ. Эпир, ачисем, сĕтел хушшине шăкăрин ларса тухаттăмăр та аслисем вырнаçасса кĕтеттĕмĕр. Чи малтан асатте кашăк тытатчĕ, вăл апат ăсса илнĕ хыççăн атте шарни сыпатчĕ. Вара тинех пире те черет çитетчĕ – эпир те кашăксене чугуна чикеттĕмĕр». Апатланнă чухнехи çирĕп йĕркене çак килте чей ĕçнĕ чухне те тытса пынă. «Пирĕн тем пысăкăш сăмавар пурччĕ, – каласа парать малалла Т.Г.Майорова. – Ăна сĕтел варрине лартатчĕç. Асатте сахăра пĕчĕккĕн çыртса

чей сыпма юрататчĕ. Малтан вăл пысăк сахăр татăкне пĕчĕк катăксем туса хуратчĕ, пире пĕрер сахăр катăкĕ паратчĕ. Эпир, пылака юратакансем, сахăра тӳрех чăмласа яраттăмăр та тепĕр катăк парасса кĕтсе лараттăмăр. Асатте пире чей ĕçме пĕлместĕр, сахăра йĕпете-йĕпете ĕммелле тесе ăнлантаратчĕ. Хăй вăл пĕрре ларнă чухне 5-6 чей чашки пушататчĕ. Чей ĕçе-ĕçе тарласах каятчĕ.»

Анна аппа, Çтаппан прототипĕн мăшăрĕ, Тулпай хĕрĕ пулнă. Пĕчĕк, питĕ хитре хĕрарăм Иван Измалч çумĕнче чăннипех те питĕ пĕчĕк курăннă. Тĕлĕнмелле пулин те, вăл чĕлĕм туртнă. Мăшăрĕ, чĕлĕм шăршине чăтма пултарайманскер, ăна тем пекех çак илемсĕр йăлана пăрахтарасшăн пулнă иккен. Анна аппан чĕлĕмне вута пăраха-пăраха çунтарнă, анчах хĕрарăм чеелĕхне çĕнеймен: асламăшĕ пасара каймассерен 20-шер чĕлĕм илсе килнĕ, вĕсене упăшкинчен пытара-пытара хунă пулнă. Мăшăрĕ пĕр чĕлĕме кăмакана ывăтсан асламăшĕ тепĕр чĕлĕмне туртса кăларнă тет. «Çак киревсĕр йăла пирĕн йăхра паянхи кунччenex пырать; манăн йăмăк Римма та пирус туртатчĕ, шăллăм хĕрĕ те туртать».

Иван Измайлович вăйĕ çинчен каласа панисем пирĕн ялта халĕ те халапсем пек çӳреççĕ. Хăйне те юмахри паттăр пек аса илетпĕр.

Чи анлă сарăлнă тата «Ĕмĕр сакки сарлака» романа кĕрсе юлнă тĕслĕхсенчен пĕри вăл – Иван Измалч чăмăрĕпе сулса ярса лашана ураран ӳкерни. Н.Мранькка куна хăй курнă тесе аса илет. Анранă лаша пурнăçра сывах юлать, кĕнекере вара çыравçă ĕç-пулăма синкерлĕ вĕçлесе кăтартать.

Иван Измайлович ялта вăйĕпе мухтанса çӳремен, хăйне яланах лăпкă тытнă. Пĕррехинче сĕтел хушшинче ларнă чухнех ар çынсем вăл хăйĕнчен йывăртарах япалана çĕклеме пултарни пирки тавлашса каяççĕ. Витере хура ăйăр сĕлĕ çисе тăнине аса илсе Иван Измайлович тула тухать те тавлашакан çынсем умĕнче лашана кил карти тавра виçĕ хутчен çĕклесе çаврăнать. Тавлашакансем тинех лăпланаççĕ.

Тепрехинче (куна кинĕ – Елизавета Сергеевна - каласа хăварнинчен пĕлетпĕр) хуняшшĕ кӳршĕ лашине кӳлет те Атăл варринчи утрава вутă патне

каять. Лавне туллиех тиесе тултарнипе киле килнĕ чухне Савраска çул çинче час-часах чарăнса тăрать, юлашкинчен вăйран кайнипе утайми пулать. Измалч нумай шухăшласа тăмасть, лашана тăварать те хăй лава кӳлĕнет. Çапла турта хушшинчех килĕ умне çитсе тăрать.

Хăш-пĕр çулсенче пирĕн прототип Атăл тăрăх пĕрене юхтарнă çĕрте те ĕçленĕ. Çак вăхăтпа çыхăннă тепĕр историе асăнса хăварас килет. Ку ĕç Куславкка пристанĕнче пулса иртнĕ. Пăрахут çине 30 пăт таякан ещĕк çĕклесе кĕмелле пулнă. Ещĕк патĕнче виçĕ ар çын апла та, капла та тăрмашнă – 430 килограмм таякан çăка вырăнтан та хускатайман. Измайлов çакна çырантан сăнаса тăнă пулнă. Юлашкинчен вăл грузчиксене хĕрхеннĕ пулас, ещĕке пăрахут çине çĕклесе кĕрсе панă. Пристань пуçлăхĕ ăна уншăн 100 тенкĕ укçа панă.

Н.Мранькkан кĕнекинчи Çтаппан лашине вăрлани çинчен калакан эпизод та – И.И.Измайловпа пулса иртнĕ историе çырса пани. Хăйĕн хура ăйăрне шыраса Елчĕк паттăрĕ Кăрмăш пасарне çитнĕ. Кунта вăл лашине шыраса тупнă, анчах чее улшуç ăна улталаса каллех лашасăр тăратса хăварнă.

Экскурси вĕçленсе пынă май сире Г.Н. Ксенофонтовăн 2011 çулта тухнă «Карамышево и карамышевцы» кĕнекипе паллашма сĕнетĕп.

Тавтапуç килсе курнăшăн!